Уй-хир ĕçĕсен пĕтĕмлетĕвĕ

# Çанă тавăрсах ĕçлемелле



(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Çумсăр та вăйлă калчаллă уйсене сăнаса пыма та питĕ кăмăллă пулчĕ. Акă «Герой», «Ударник» тата «Бархаткин» хуçалăхсен кĕркунне акса хăварнă «житница» сортлă тырă уйĕсенех илер. Пĕр метр çӳллĕшне çитекен çумсăр тырă çине савăнса пăхмалла çеç. Тухăçĕ пулассине те шанма пулать. Анчах ку пĕртте лăпланса лармаллине пĕлтермест. Çак культурăн агротехникине алла илмелле. «Козлятник» культурăпа та «Ударникра» паллашрĕç. Выльăх-чĕрлĕх валли çак ӳсен-тăран паха апат иккенне кунта темиçе çул каяллах ăнланнă.

Ĕçĕ ака хыççăн та нумайха. Ильич яч. хис. хуçалăхра уйсене тислĕк кăларассипе тăрăшаççĕччĕ. Юнашар Чкалов яч. хис. хуçалăхра ку ĕçе вĕçленĕ те. Выльăхсене валли вăхăтра пысăк пахалăхлă симĕс апат хатĕрлесси те паянхи кун йĕркине кĕрсе пырать.

– Уй-хирсенче тăрăшнă пур ĕçченсене те пысăк тав сăмахĕ каламалла, - терĕ пĕтĕмлетӳ тунă чух район пуçлăхĕ Юрий Александрович Иванов. - Ĕçлес кăмăл, хастарлăх пысăк пулни ĕнтĕ пире паян республикăра малтисен ретĕнче пыма пулăшать. Пĕр-пĕрне ăнланса, пулăшса ĕçлесе пымалла. Акнă уйсене, пĕтĕмĕшле илсен, япăх тесе каламалла мар. Анчах малалла та ĕçсене вăхăтра туса ирттерессипе тимлемелле. Мĕншĕн тесен уй-хирсенчи паянхи ĕçсем хĕлле выльăх-чĕрлĕх çине пысăк витĕм кӳреççĕ. Тăрăшни курăнать. Татах та тăрăшмалла.

Район пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.К. Ананьев хăйĕн сăмахĕнче хуçалăхсенчи çĕр ĕç культури ӳссе пынине каларĕ.

- Укçа-тенкĕ йывăрлăхĕсене, кадрсем çитменнине, техникăна хатĕрлесе çитерейменнине пула хăш-пĕр хуçалăхсенче ака ĕçĕсене мĕн пултарнă таран пурнăçламанни те курăнчĕ. Çав хушăрах кĕрхи çĕртме ирттернĕ хирсем пур çĕрте те тенĕ пекех таса курăнаççĕ. Çĕрсемпе хура пусă урлă ĕçлесе пырсан кăна эпир вĕсене çум курăкран тасатма пултаратпăр. Пирĕн кун пек ĕçлеме паян майсем пур: выльăх-чĕрлĕх шучĕ чакса пырать. Çитменлĕхсем тĕрĕслевре куç умĕнчех пулчĕç. Нумай çул ӳсекен курăксен лаптăкĕсене вăхăтра улăштармаллине пурте ăнланчĕç пулĕ тетĕп. Çум курăкне пĕтерессипе паян çине тăрса ĕçлемелле, - çапла пĕтĕмлетӳ турĕ Владислав Кириллович.

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп агрономĕ А.И. Павлов та çур акине хутшăннă мĕн пур ертӳçĕсене те, специалистсене те, ĕç çыннисене те тав сăмахĕ каларĕ. Уйрăм хуçалăхсем çинче те кăшт чарăнса тăчĕ. «Передовик», Чапаев яч. хис. хуçалăхсем малалла туртăннине асăнчĕ. «Суворов яч. хис. тата Чкалов яч. хис. хуçалăхсем ака-суха лаптăкĕсене пысăклатни те савăнтарать», - пытармарĕ вăл хăй шухăшне. Александр Ильич кĕрхи культурăсемпе тимлесе ĕçлемеллине тепĕр хут аса илтерчĕ, вĕсем йышăнакан лаптăксене пысăклатсан аванрах пуласса каларĕ. Хальхи вăхăта илсен Суворов яч. хис, Ильич яч. хис. тата «Ударник» хуçалăхсенче кĕрхи культурăсемпе епле ĕçлесе пынине тĕслĕх вырăнне илсе кăтартрĕ. Асăннă хуçалăхсенчи Г.Н. Албутова, Ф.А. Егоров тата И.А. Никитин агрономсем кĕрхи культурăсенчен тухăç пысăкрах пулнине ăнланса ĕçлесе пыраççĕ. Шел пулин те, районти пур хуçалăхра та çакнашкал ĕçе юратса, пĕлсе пурнăçлакан агрономсем çук. Ăста кадрсем çитменни вара тыр-пул тухăçĕ çине те витĕм кӳрет.

Уй-хирсенчи лару-тăрăва сӳтсе явнă хыççăн çакăн пек пĕтĕмлетӳ турĕç: «Герой», «Ударник», «Восток», «Бархаткин», «Свобода», Суворов яч. хис., Ильич яч. хис. тата Чкалов яч. хис. хуçалăхсем çур аки тăвассипе пысăк хака тивĕç. Кашни хуçалăхрах лайăххи пур, апла пулсан ыттисен те çак шая çитме тăрăшмалла. Малаллахи тĕллевсене пурин те пурнăçласа пымалла.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хуçалăхсен ертӳçисемпе тырă тухăçĕ пирки шутлать; «Ударник» хуçалăхăн «житница» культури чуна савăнтарать.**



Редакци почтинчен

# Паянхи çамрăксене шанас килет

Кунсем хăвăрт иртеççĕ. Кăçалхи çанталăк условийĕсем те пирĕн енне çурхи ака-сухана ытти çулхисенчен самай маларах çитерчĕç. Чылай хуçалăх акана ăнăçлă вĕçлерĕ ĕнтĕ. Çав вăхăтрах çĕр ĕçĕ çине алă сулакансем те çук мар-ха.

Чăваш телевиденийĕпе Олег Прокопьев паракан кăларăмсене ир тăрсан та, каçхине те итлеме питĕ кăмăллă. Акă кăçалхи мартăн 17-мĕшĕнче каçхине тата тепĕр кунне ирхине пулнă кăларăмсене пăхсан-итлесен камăн чунĕ савăнмарĕ пуль! Унта Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров Чăваш Енри «уçман çеремсем» пирки уççăн калани Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн Аслă вăрçăра юн юхтарнисемшĕн мĕн чухлĕ хаклă передача шутланчĕ пуль. Вăрçă хирĕсенче пирĕн салтаксем тăван çĕрĕн кашни утăмĕшĕн юн тăкнă вĕт-ха. Халĕ вара вăл çĕрсем çум айне пулни тĕрĕс-и? Президентпа килĕшетĕп – тĕрĕс мар. Пирĕн Юнкă çĕрĕ 10-15 çул ĕнтĕ «тăрăшсах» çум курăк ӳстерет. Ун çинче кăшт ĕлĕкхилле хăçан тулăх тыр-пул кашласа ларĕ-ши? Ял çыннисен кăмăлне çĕклесе тулли пучахлă хир урлă хăçан «хир карапĕ» иртĕ-ши? 15-17 çул каялла çак хирсенче вăй хунă хресченсем паян тивĕçлĕ канура. Çамрăкĕсен вара ĕçлес кăмăл иккĕмĕш вырăнта. Малта тăраканнисем эрех-сăра та, вăрлас-çаратас туйăмсем. Халăх сăнавĕсем, вĕсене пăхса ĕçлесси нивушлĕ манăçа тухрĕç? Ĕненес килмест.

Халăхра çапла калани пур: «Пуянлăхпа мул ĕмĕре пыракан япаласем мар». Пурлăха темĕнле кĕске хушăра та çухатма пулать: е вăрлаççĕ ăна, е çĕр çывăрмасăр тунă пурлăх ирĕке кайнă вут-çулăмра кĕлленет, е шыва каять. Этемĕн чун пуянлăхĕ, чун илемлĕхĕ, çыннăн ĕçлеслĕхĕ шывра та путмасть, пушарта та çунмасть. Вĕсене упраса хăварса малалла аталантарни ӳсĕм çулĕпе утма пулăшать. Çавăнпа мар-и çамрăксене ват асаттесем хăйсем каланине-сăнанине упрама сĕннĕ, ĕçлеслĕхе тата ăнланупа килĕшӳлĕхе аталантарма ыйтнă. Юлашки çулсенче ваттисем хушни-сăнани çине çамрăксем алă сулчĕç курăнать. Мĕнле ултав кĕрсе вырнаçрĕ ĕмĕртен туслă пурăннă ĕçчен халăхăмăр чĕрине, мĕнле тискерлĕх? Мĕнле чир вăл? Кам калама пултарĕ унран паянхи çамрăксене мĕнле сыватмаллине? Эпир çитĕнтермерĕмĕр-и-ха вĕсене? Çывăрнă çĕртен вăратмасăр хĕрхенсе хамăр çеç ĕçлени, ачамăрсене ачаллах пур ĕçсене те хăнăхтарманни, вĕсем пирĕн нушана ан курччăр тесе хĕрхенни çитермерĕ-и-ха паянхи лару-тăрăва?

Пире ӳстернĕ вăхăтра унашкал хĕрхенӳ пулман-çке. Хресчен хăйĕн ачине çава тухсан хăйĕнпе пĕрле хĕвел тухиччен ура çине тăратнă, малтан пӳртри ĕçсене хăнăхтарнă, алла кĕрепле тытма пуçласан утă тавăрма илсе çӳренĕ, тырă пиçсе çитсен ачасем ашшĕ-амăшĕнчен юлмасăр çурлапа тырă вырнă, арçын ачасем лашапа ĕçлеме хăнăхнă, ĕçре ĕшеннĕ çамрăксем уявсенче аслисемпе пĕрле савăннă. Паян халăхăмăрăн çак ырă ăсĕ хыçала юлчĕ пулас. Çавăнпах таврара сухаламан çĕрсем те йышланса кайрĕç. «Уçман çеремсем» кашнин пахчи хыçнех çитрĕç. Вуншар çул «ĕçлемесĕр» выртнă çĕрсене сухаласа аксан вĕсем çинче паян вăйлă тыр-пул ӳсмелле. Çапла пуласса шанас килет те...

Чăваш Республикин Президенчĕн Н. Федоровăн пуçарăвĕ пурнăça кĕрсен питех те аван пулмаллаччĕ. Ун чухне тин çум кашлакан хирсем çак тасамарлăхран тасаласса, унччен выльăхпа тулли пулнă фермăсем çум айĕнчен тухасса, мехпарксенче хăватлă трактор-машина çум хыçĕнчен пăхса ларнине манасса шанма пулать. Çавăн чух пирĕн Юнкă çĕрĕ çинче те гектартан 30-шан центнер тухăç паракан тырă кашласа ларĕ. Кĕтсе илĕпĕр-ши çак кунсене?..

**И. ВАСЮХИН,**
**ĕçпе вăрçă ветеранĕ.**
Юнкăпуç ялĕ.

Каникул

## «Кустăрмара»



Акă вĕренӳ çулĕ те вĕçленчĕ. Хаваслă каникул кунĕсем пуçланчĕç. Ачасен канăвне усăллăрах ирттерес тесе Шурча шкулĕнче «Кустăрма» ятлă лагерь йĕркелерĕç. Ăна ертсе пыма В.В. Бычковăна шанса пачĕç. Вожатăйсем вара аслисен Н.М. Тюринапа Н.В. Борзаева, кĕçĕннисен – Т.Ю. Тимофеевапа А.В. Павлова. Пирĕн лагере 1 - 8 класра вĕренекенсем çӳреççĕ.

Кашни кунах эпир зарядкăран пуçлатпăр. Кун пуçламăшĕнче ялав çĕклетпĕр, вĕçĕнче ăна антаратпăр. Çак вăхăтсенче лагерь гимнĕ янăрать. Кун йĕркинче мĕн пулассипе паллашма канмалли пӳлĕмре стенд йĕркеленĕ. Унсăр пуçне кашни ир линейкăра та кун йĕркипе паллаштараççĕ.

Чи интереслĕ кунсенчен пĕри 3-мĕш июньте пулса иртрĕ. Çак кун эпир «Зарница» вăййă ирттертĕмĕр. Çак вăййа ирттерме О.В. Бардасова нумай тăрăшрĕ. Тĕрлĕ конкурссем пулса иртрĕç: «Пĕрремĕш пулăшу», «Чи вăйли те хастарри», «Тăван çĕршывăм», «Çамрăк футболист» тата ытти те.

Аслă класра вĕренекенсем виçĕ ушкăна пайланчĕç: «Парадокс», «Искатели» тата «Дружба». Кĕçĕн класра вĕренекенсем вара икĕ ушкăн йĕркелерĕç: «Улыбка» тата «Дружба-2».

Конкурссене ачасем хаваспах хутшăнчĕç. Кашниех хăйĕн вăйне тата ăс-тăнне тĕрĕслеме пултарчĕ. Никам та кая юласшăн пулмарĕ.

Вăйă пĕтнĕ хыççăн маттуррисене грамотăсемпе тата парнесемпе чысларĕç. Пĕтĕмлетӳсем тунă хыççăн пĕрремĕш вырăна «Парадокспа» «Дружба-2» пайларĕç, иккĕмĕш вырăна – «Дружбăпа» «Улыбка», виççĕмĕш вырăна вара «Искатели» команда йышăнчĕ.

Лагерьти пĕрремĕш кунсем хаваслă та усăллă иртрĕç. Çакăн пекех ытти кунсем те савăнăçлă иртесси пирки эпир иккĕленместпĕр те.

**А. ЕРДУКОВА,**
**«Кустăрма» командирĕ.**

## Пиллĕкмĕш ĕç чĕрĕкĕ пуçланчĕ

Акă сисĕнмесĕрех тепĕр вĕренӳ çулĕ те вĕçленчĕ. Ачасемшĕн чи кĕтнĕ те савăнăçлă вăхăт çитрĕ.

Çуллахи каникула вĕсем усăллă ирттерме тăрăшаççĕ: кам лагере канма каять, кам килте ашшĕ-амăшне хуçалăхра пулăшать, кам вара шкулти сывлăха çирĕплетмелли лагере çӳрет е кунти ĕçпе кану лагерĕсенче тăрăшать.

Оринкинти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта кашни çулах тĕрлĕ лагерьсем ĕçлеççĕ. Кăçал та кунта 3 тĕрлĕ лагерь уçăлчĕ: сывлăха çирĕплетмелли «Хĕлхем», «Факел» ĕçпе кану лагерĕ тата спорт лагерĕ.

Лагерьсем июнĕн 2-мĕшĕнче ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсене хаваслă лару-тăрура уçрĕç. Малтанах ачасене çуллахи каникул тата пиллĕкмĕш ĕç чĕрĕкĕ пуçланнă ятпа шкул директорĕ саламларĕ. Вăл çуллахи вăхăта усăллă ирттерме, сывлăха çирĕплетме сунчĕ.

Ачасен ĕç кунĕ ирхи линейкăран пуçланать. Унта вĕсем кун йĕркипе паллашаççĕ. Апатланнă хыççăн кашни лагерь планпа килĕшӳллĕн ĕçлеме пуçлать. Пĕрисем эмел курăкĕсем пуçтараççĕ, теприсем шкул участокĕнче вăй хураççĕ, виççĕмĕшсем тĕрлĕ вăйăсем выляççĕ. Ĕçĕ вара пурин валли те çителĕклĕ: пахчара помидор лартмалла, йăрансене çумламалла, колхоз хирне кăшман çине тухмалла.

Килĕшет ачасене шкулти лагерьсенче, çавăнпа унта ачасем йышлăн çӳреççĕ. Лагерьсене вара çак воспитательсем ертсе пыраççĕ: Т.Н. Михайлова, И.Г. Скворцова, Е.А. Кольцова, Т.С. Горшкова, В.В. Калинина, А.В. Рожкова, Л.В. Родионова, С.И. Алексеев, Т.П. Алексеева.

Апла пулсан вĕсене те, ачасене те вăхăта усăллă та тухăçлă ирттерме ăнăçусем сунар!

**Т. МИХАЙЛОВА,**
**«Хĕлхем» лагерь ертӳçи.**

## Лагерьти пурнăç интереслĕ

Пирĕн шкулта икĕ лагерь уçăлчĕ. Пĕри - ĕçпе кану лагерĕ, тепри – сывлăха çирĕплетмелли.

Ачасем вĕсене хаваспах çӳреççĕ. Мĕншĕн тесен унта интереслĕ, тĕрлĕ конкурссем, ăмăртусем иртеççĕ, тутлă çитереççĕ. Ачасем çĕнĕ юрăсем, ташăсем, вăйăсем вĕренеççĕ.

«Хĕвел» тата «Асамат кĕперĕ» лагерьсен ачисем футболла вылярĕç. Вăйă çав тери çивĕч иртрĕ. Пирĕнпе пĕрле лагерьте ĕçлекен А.Н. Иванова тата М.И. Колбасова воспитательсем те çак ăмăртăва хутшăнчĕç. «Асамат кĕперĕ» 4:0 шутпа çĕнтерчĕ.

**О. САДОВНИКОВА.**

Атапай шкулĕ.

## Халăх чунĕ – юрăра

Пин-пин юрă, пин-пин тĕрĕ çĕршывĕ теççĕ пирĕн Чăваш çĕршывне.

Чăнах та, мĕн авалтанах чăвашсем юрлама юратнă. Пурнăçĕ йывăр пулсан та йывăрлăхсене юрăпа пусарнă. Мĕн тĕрлĕ юрă çук пуль пирĕн халăхăн: туй, хăна-вĕрле, вăйă, ĕç, салтак, сăпка юррисем...

Чăвашсен хăна, ĕçкĕ-çикĕ юррисем нумай теççĕ. Ку пирĕн халăх ĕçке-çике ытларах кăмăлланă тенине пĕлтермест.

Пирĕн асаннесемпе асаттесем, кукамайсемпе кукаçисем яланах сăпайлă, виçеллĕ пурăнма пĕлнĕ. Пĕр-пĕринпе яланах хутшăннă. Ĕçрен пушă вăхăтра сăра ĕçме чĕннĕ.

Кашни ялта тенĕ пекех сăмах-юмах ăстисем, сăвă-юрă хывакансем тупăннă.

- Ваçлей кум, санăн юрру питĕ килĕшрĕ, тепре юрласа парха,- тенĕ. Вара килĕшнĕ юрра пурте вĕренме тăрăшнă. Пурăна киле вăл ял юрри пулса тăнă. Кам та пулсан урăх яла хăнана кайсан, унти юрра вĕренсе килнĕ. Çапла вара кăмăла кайнă юрă халăх юрри пулса кайнă.

**Катя ФЕДОРОВА.**

Ярапай шкулĕ.